Нестĕр Йанкас



# сăвăсем

# ТУПМАЛЛИ.


| | | Стр. |
|---|---|---|
| 1. | Умсăмах вырăнне | 5 |
| 2. | Çурхи хĕвелпе «калаçни» | 9 |
| 3. | Йала | 16 |
| 4. | Ўкĕтлĕ каç | 28 |
| 5. | Аппа йурри | 36 |
| 6. | Кĕрхи супотнĕк | 40 |
| 7. | Хĕрлĕ тырă лавĕ | 42 |
| 8. | Отпăск хыççăн | 44 |
| 9. | Çĕршыв ўсĕмĕшĕн | 47 |
| 10. | Ђеђеклĕ çĕршывра | 50 |
| 11. | Епĕр—мĕлйунлă Ленин | 54 |
| 12. | Майакковскипе «курнăçни» | 57 |
| 13. | Хурçă йурăсемпĕн | 62 |

3828

Ђӑваш пролетлиттераттурӗн сӑпкинђе
пӗрле аталанма пуçланӑ пиђђесене—
Илле Тукташпа
Уйӑп Мишшине.



Нестер Йанкас

ВĂТАМ АТĂЛ КРАЙĔНҪИ
ПРОЛЕТТАРИ ПИССАТТĔЛĔСЕН АССОТСИАТСИЙĔ
ҪĂВАШ ҪЕКСИ

НЕСТĔР ЙАНКАС

# СĂВĂСЕМ

Умсăмахĕ Ил. Ҫеменăвăн

ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИСЕН ПĔРЛЕШĔВĔ

Вăтам Атăл крайĕнҫи Патшалăх Istattĕlstvi
Самар * 1932 * Мускав

**Редактор Ив. Викторов.**
Сдано в набор 2/IV-32 г.
Подписано к печати 19/VII-32 г.

Крайлит № Г-947. СВ ОГИЗ № 679. Инд. VI-X-н-4-б.
Тираж 3.000. Форм. 70×93. 2 п. л. Кол. зн. в печ. л.
56.000. Типография им. тов. Мяги Средневолжского
КрайГИЗ-а в г. Самаре.

# УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ.

Нестĕр Йанкасăн ку спорнĕкĕ пултарулăх çулĕнҫи иккĕмĕш тапхăрне пĕтĕçтерет. Кунти сăвăсене, пĕтĕмпе тенĕ пекех, поет 1928—29-мĕш çулсенҫе çырнă. Вĕсен характĕрĕ, пултарулăхри вырăнĕ çинҫен епĕр кĕскен кăна ҫарăнса тăрасшăн.

Йанкас поеçинҫе пуринҫен ытла—йалпа хулан происвотствăллă çыхăнăвне çирĕплетес сатаҫ анлă вырăн йышăнса тăрат.

Кĕрлех,
        респуплĕк!
                комунисăма
                        ҫуп-ыткăнтар,
йалпа хула,
        алла-алăн,
                пĕрлех!
Колхос,
        ес
            савăта çимĕç турттар,
а, савăт,
        ес
            ăна
                шнейккă,
                        плук,
                                трактăр... леç!—

тесе йурлат поет, татăклăнах ҫĕнет вăл йалпа хулари ĕç массине хăйсен происвотствăллă çыхăнăвне

çирĕплетме. Поет—йалпа хула ўсĕмĕ вăл вĕсен хушшинчи происвотствăллă çыхăнăвĕ çирĕпленсе пынинчен килнине тĕрĕс ăнланаť.

Анчах та, йалпа хула пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрас ĕçре рапоччисем те, хресченсем те пĕр виçере шутланмаççĕ. Ку ĕçре рапоччи клас, хула пролеттариачĕ, йертсе пыракан вырăн йышăнса тăмалла. Йала сотсиалисăмла улшăнтарса çĕнетесси те, хресченсен вакпуршуаллă кăмăлĕсене улшăнтарса çĕнетесси те—пролеттариат хăйĕн итеолокине йалсене сарнинчен аталанса пымалла. Çак ыйту Йанкас поет пултарулăхĕнче çийелтенреххĕн кăна йĕрленсе йулнă.

Поет ачаллах (15 çулта) йалтан хулана, рапоччисен коллективне пырса кĕнĕскер, происвотствă ыйтăвĕсене те çутатма тăрăшасшăн хăйĕн сăввисенче. Хулан ĕçĕ, происвотствăри хĕрўллĕ ĕç хаваслантараť поета, мотторсен шавĕ çĕклентерет ăна.

Çиçкĕн,
çиçкĕн алра,
саспалли,
черетлен сăмахпах
кассăран*!—
Ĕçпе хытнă
харсăр ĕç алли
ырма пĕлмĕ вăл ман
нихăçан,—

саспаллисемпе калаççах хăйне хăй хĕтĕртет поет хаваслăн хĕрў ĕçе. Анчах Йанкас поетăн происвотствă çинчен çырнă сăввисенче машинсем кăна шавлаççĕ, кĕрлеççĕ... Происвотствăра ĕçлекен чĕрĕ çынсем, утарнĕк-рапоччисем, утарниччĕствă, сотсиалсăмлă ăмăрту çинчен поет шарласшăнах мар.

---

* Кассă—типокрафинчи саспаллисем выртакан пўсемлĕ йешчĕк.

Рапоҫҫисен ҫирĕп коллективĕ тĕтреллĕн кăна курăнаҭ Йанкас сăввисенҫе. Поетпа пĕтĕм происвотствăри пролеттариат хушшинҫе те пĕрлĕхлĕ ҫыхăну сахал. Поет хăйне коллективран ăраспах уйăрса тăратаҭ. Ҫавăнпа та унăн шухăшĕсем супйективлă кăмăлран тухса пыраҫҫĕ. Кунта поетăн уйрăмлăхĕ, интивитуалăхĕ, «еп» тени мала тухса тăраҭ.

Поет йал ҫинҫен ҫырнă ҫух та, ĕҫхресҫен массине кивĕ йăласене таптаса ҫĕнĕ пурнăҫ тума йыхăрнă вăхăтрах, ҫас-ҫасах ҫутҫанталăк итиллийĕ ăшне путаҭ, ҫара естеттĕк тыткăнне парăнаҭ; ҫеҫексемпе, «кăтра ҫӳҫлĕ» хурăнсемпе киллепет, вĕсемпе, тĕлĕкри пек, ирĕлсе калаҫаҭ... Комуниссен парттипе комсомол йалсене сотсиалисăм ҫулĕ ҫине йерттсе тухни, коллективисатсипе клас кĕрешĕвĕ Йанкас поеҫинҫе уҫҫăнах курăнса тăмаҫҫĕ.

Ҫӳлте асăннă ҫак кăлтăксем—Йанкас творҫҫĕствин ҫи пысăк ҫитменлĕхĕсем. Вăл кăлтăксем—поет хăйĕн творҫҫĕствинҫе тиалектĕккă меттăтне алла ҫавăрса илейменнинҫен, вырăс поеҫĕсемпе—Торонин, Орешпин, Клҫуйĕв—криттĕкле сисĕмлĕхсемсĕрех усă курнинҫен тухса тăнă. Вĕсен шухăшĕсем Йанкас поеҫине хушăран самай сăрхăнса кĕнĕ. Пролеттари писсаттĕлĕ пулас тесен, ҫăн малтанах писсаттĕлĕн ленинисăм хĕҫпăшалĕпе авăрланмалла. Йанкас хăйех:

Хурҫă хĕлĕх тирме
    ҫĕлхене—
ĕҫ ҫинех
    ĕслетер
ҫĕрене.
Унҫухне
    тин калар:
ҫĕршыв,

ме—
ĕç шавне мухтакан
кĕввĕме!—

тесе хăй умне çав сатаҫа лартаӳ. Анҫах унăн ку тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле-ха.

Йанкас виçĕ çул хушшинҫе (вăл 1928-мĕш çулăн вĕçĕнҫе çырма пуçланă) сăвă тех ĕккине алла çавăрса илсе пултарулă сăвăçсен шутне кĕҫĕ. Ку спорнĕке кĕнĕ «Епĕр—мĕлйунлă Ленин», «Ҫеҫеклĕ çĕршывра», «Çĕршыв ӳсĕмĕшĕн», «Хĕрлĕ тырă лавĕ» сăвăсем т. ыт. те сотершанипе те, хутошĕстă йенҫен те—паха сăвăсем. Вĕсем—поет йулашки вăхăтра пысăк ӳсĕмсем тунине татăклăнах кăтартаççĕ; поет малашне те, малта асăннă кăлтăксене пĕтерсен, паха йапаласем парасса шантараççĕ. Çак майпа аталанакан çамрăк сăвăçсемшĕн Йанкас поеçийĕ пĕҫĕкех те мар шкул пулса тăмалла.

**Ил. Çеменăв.**

Самар, 30/III-1932 ç.

# ÇУРХИ ХĔВЕЛПЕ «КАЛАÇНИ».

Кĕрен хăва
    кăҭкисене
шерепелет
    йаштак пӳрен.
Хĕвел
    хĕлхем урисене
пӳртех ҭикет
    ҭӳреҭерен.
О,
    сар хĕвел!
    пӳрте кĕрех
ман патăма
    ҭӳреҭерен.
Хĕрхӳ пӳрен
    çĕре пĕрех
еп
    кĕрĕке
        хывса
            перем!
Хĕвел кулаĭ...
    Мана
        итлерĕ:
Пушах-и
    санăн
        кĕреке?
Кĕрсе ларам,

апла-тӑк...
терӗ.
(Ҫасрах
еп хыврӑм
кӗрӗке).
Хӗвел
пӳрте кӗҫӗ,
пуплет.
Халапӗпе
вӑл
пит мухтанҫӑк.
Хулле-ен:
ҫӗн хир питне
сиплеп,
манран
кӗтейӗр,
тет вӑл,—
шанҫӑк...
Халап ҫине
сӑмах купи
хыҫран-хыҫах
сиксе утланҫӗ.
Йӑл-йӑлл...
йепрет
хӗвел тути:
айта,
тула тухар-ха,
анҫӑк.
Тула
ҫӗнет мана
хӗвел.
Тухам, уш,
терӗм,—
ну,

айта!..
Ҫăвар туллин
ҫăсмак кĕвве
хыткан автан
тăсать
тулта.
Навус ҫинҫе
хăй
лапăртаннă.
Шарт-шарт!
ҫапать
ҫунаттине.
Хĕл ыйхĕпех-мĕн
ес
пут-лан-нă-ă!
ки-ки-ре-ку-уу!—
тăсать
мăйне.
Автан ҫине
хытах
ҫиллентĕм.
Ăшран
вăтантăм
тем пекех...
Анҫах,
пахҫа
умра
кӳлленҫĕ
ҫил-шăрт тĕлнех—
ҫеҫенлĕхпе!
Ман ҫиллĕхе
хĕвел
вăрларĕ.
Умма карать

вӑл
пин илем!
Вӑлах
питрен
ҫемҫен лӑпкарӗ
ҫӗнсе илсе
ҫурхи ҫиле.
Хӗвел
лӑпкаӗ,
лӑпкаӗ
мана.
Йӑваш саспа
халап пуҫларӗ:
ман шухӑшпа,
ку пахҫана
нумайтарах акас,
тет,—
ҫарӑк.
Тымар апатпала
ӗне
витрен-витрен
сӗтне
сутарӗ.
Ҫаплах, ара...—
тимпех
сӗнет,—
аках кунта,
тет,—
кишӗр,
ҫарӑк...
Санпа,
хӗвел,
еп,
теп,—

ҫукласнă.
Айта-ха,
танкăшар
уйа.
Виҫ пусăна
унта хаҫ
каснă
вĕт епĕр,
снаш,
сакăр пайа.
Каллех
йăл-йăлл...
йепрет
хĕвел.
Нӳрек хире
тухса сĕнкетпĕр...
Уйар
тӳпе
ҫурхи кĕвве
ман ҫĕреме
ҫыхаТ
хисепсĕр!
Килсемĕр
иррр!..
ĕҫ пуҫлăр ирр!—
тăрисемпе
тӳпе
ҫĕтрет.
Апла хаҫ
сирĕн
ҫĕнĕ хир!
тесе
хĕвел
шăлне

йĕрет.
Хĕвелĕн
шăлĕсем
веç
ылттăн.
Вут хĕмленет
куçĕсенчен...
Аван!
тет вăл.
Йалкăшрĕ
хыттăн:
кунран
тивлет тупаĭ
ĕçчен!
Çаплах,
çаплах,
акас-ха тетпĕр
кăçал
хире
нумай тĕссем.
Хĕвелпеле
хĕрсех пуплетĕп:
веçех хатĕр
вăрлăхĕсем!
Хĕвел
йĕрет шăлне,
пуплет.
Халапĕпе
вăл
пит мухтанчăк:
çĕн хир
питне
сиплеп,
сиплеп!

манран
    пурах-ха,
        тет вăл,—
            шанҫăк!
Халап ҫине
    сăмах купи
самай
    сике-сике
        утланҫĕ.
Йулашкинҫен,
    хĕвел тути:
ҫитет!
    тесе
        ҫатах хупланҫĕ.

1928 ҫул.

## Й А Л А...

У м - с ы п ă к.

1.

Аванах-мĕн,
çĕршывне
«поет» йат пÿрмешкĕн—
ахăр пурнăçăн шавне
ĕçсе
ÿсĕрлмешкĕн.

Ман
каллех ак
сас тĕвви
сÿтĕлме тапранҫĕ.
Ҫĕреме
ÿй-хир кĕвви
шăнăçми капланҫĕ.

Йанкăслах,
ҫĕлхем,
çĕн сас,
йанкăсла—
тăваншăн.
Хулапа
йем-йешĕл кас
хаҫ тăванлă маншăн.

Çавăнпах еп
уй-хире
хурçă сас сапасшăн.
Унти çепĕç кĕвĕрен
йурă хурçăласшăн.

2.

Хăналарĕ çĕршывне
çурăн кĕрекийĕ.
Тĕтреленҫĕ куç умне
сĕлĕ шерепийĕ...

Хуларан еп—
ĕçлекен,
уй-хире килетĕп.
Тен,
пушах-тăр кĕреке
маншăн
уй-хирте те?

3.

Хам ĕçе еп
савăтра
йуратсах тытаттăм.
Шурналра
йе хаçатра
саспалли пухаттăм.

Хăшҫух кĕç еп
хуларах
уй-хирпе супаттăм.
Саспаллиллĕ алăрах
пуҫахсем кураттăм.

Хапрăк хĕрĕ
кассăран
саспалли пухаҫҫи—
вăл
йе йĕтĕн улăхра,
йе ҫырла-мĕн
шурлăхра
татнăн туйăнаҫҫĕ...

Хир каҫҫи еп,
ҫавăнпах
уй-хирпе супаттăм.
Моттор тăснă йурăпах
хир шавне
туйаттăм.

4.

Уй-хир тăрăх
еп утап.
Ҫанталăкĕ шăрăх.
Утнă майăн
ывăтап
йуррăма
хир тăрăх:

Ан ылхан
мана,
уй-хир,
саншăн, тен, еп
таркăн...
Ҫĕрҫунтан еп
ҫăн та

ир
хурçăланма тартăм...

Çĕкленсех пек
ман кĕвве
йешĕл хир итлесшĕн...
Сарă хĕр—
йепре хĕвел
манах
куç хĕсесшĕн...

Тăри
тăрă тӳперен
сапрĕ
йарăм йурă.
Ен те
вĕçĕттĕм пĕре
унпа
тӳпе тăрăх...

Хирти шухăш
пуçăмра
тĕлкĕшсе çӳресшĕн.
Хурăн ав—
çӳçне шывра
авăнсах çӳхесшĕн...

Кăтра çӳçлĕ хурăна
ыталассăм килçĕ...
Ылханмасăр хир
мана
хăй çĕрçине илçĕ.
Тавраллах ман,
апăршан,

кусамарсем ҫупрӗҫ.
Ҫил ак
хăмăр ыраша
ҫунаҫӗпе ҫупрӗ.

Умлă-хыҫлăн пуҫахсем
пырса ыталанҫӗҫ.
Тинӗсри пек
мăн хумсем
тайăлса хумханҫӗҫ.

Ҫӳхенет
сӗткенлӗ хир
симӗс тинӗс йевӗр.
Йешерет
умра ак—
вир,
тулă,
виккă,
клевӗр...

5.

Ой, ăшра
ҫӗрем ҫиҫет—
ташша йаҫӗ кăкăр.
Ак ăҫта ӳсет,
пиҫет
хурҫăсемшӗн
ҫăкăр!

Ак ăҫта—
тăван ҫӗршыв!
Ак ăҫта

ун тумĕ!
Ак вар-улăх,
кĕмĕл шыв
выртнă
вĕтлĕх çуммĕн...

Хумсемпе
тек кĕрешет
шыврах
пĕҫĕк сулă.
Пилĕк çӳллĕш сĕрĕшет
курăкпала
улăх.

Çилпе
хăмăр хăмăшсем
шĕкĕлтетнĕ-çемĕн,
ҫĕвĕл-ҫĕвĕлл...—
кайăксем
йанкăслаççĕ çемĕ...

Сывлăш уçă-çке утма
вĕтлĕх,
улăх çийĕн...
«Пиплисемсĕрех»
çăтмах—
йешĕл хир ҫĕрçийĕ!

6.

Вĕтлĕх çуммĕн
айлăмпа
ак кас
сапаланнă.

Ик урамӗ
хурӑнпа
капӑр шупӑрланнӑ.

Сарӑ ҫӑрӑш пӳрт-ҫуртсен
улӑм ҫийӗ-пуҫӗ—
тейӗн—
ахӑр хӗрт-суртсен
арпӑш ылттӑн ҫӳҫӗ...

Ак еп
ҫӗнӗ хапхаран
кӗтӗм те
утатӑп...
Кӗҫ тӗлпултӑм
Сахара:
—а-а...
мӗнле пурнатӑн?

Сахар
хӗсӗк куҫсемпе
мана хыт тӗллерӗ:
—ниҫҫово-ха,
мӗн ӗҫпе
есӗр килнӗ?—
терӗ.

—Палламастӑвим вара?
Кирилен еп—
Неҫтӗр,—
пӳлтӗм хӑвӑрт
Сахара,
хӑй
мана пӗлмест те...

—А-а... Неçук!
ăçтан паллан—
шаççем вырăс майлă...
Çăваймарăм-ха алла,—
тесе
тăсрĕ алă.

—Хăйамат,
кăçал аран
касăм
калхус уçрĕ.
Икçĕр çирĕм йетакран
унта
çĕрĕш куçрĕç.

Ну, тырри вĕсен!
ăнта-а...
кайсах пахаларăм.
Куçас шут пур
хамăн та,
вăрçасшăн, мур,
арăм...

—Куçмалла,
мунди, ара,
куçмаллах çав...
тетĕп.
Кăвакарнă Сахара
колхосах
ĕрлетĕп.

7.

Тепĕр çын ак
хапхаран

кĕҫĕ,
мăк сухаллă.
Куç хĕссе вăл
Сахара
тăсрĕ хура алă.

—Мĕн йăслаҭ-ха
саппала
ку вырăс,
Сахарҫҫă?..
Аҭа,
ут-ха маппала,
сăра сĕрнĕ
карҫăк...

—Вырăс мар-ха ку,
ҫăваш,
Кирилен-ха каҫҫă.
Пуплешет-ха пит йăваш,
ну, кăштах тăхтаҫҫĕ...

—Кирилен...
а-а... Неçук!
кам сана
паллатăр!..
А еп сан вĕт
кумаçу,
ну, иксĕр те аҭăр...
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

Ĕçкĕ мар хаљ
пуçăмра
маңăн—

савӑт йашӗн...

. . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . .

Килленет ак
ман умра
вӑйӑ,
йурӑ,
ташӑ...

Ленин йаҫӗ
йурӑра
Шӑранаҫ йӗркеллӗн.
Кашни ҫамрӑк ункӑра
хӗрлӗ пӗсехеллӗ.

Тулли питлӗ хӗрӗсен
тутийӗсем—
йӗрӗх...
Хӗрлӗ йавлӑк тӗрӗсем—
«КИМ» паллиллӗ
тӗрӗ.

8.

Йашӑ-хӗр
мана курсан:
— Неҫук!
Неҫтӗр!—терӗ.
Ахӑр саслӑн
кӑшкӑрса
мана кӗпӗрлерӗ.

— Нуккӑ, Неҫтӗр!
Ну, Йанкас!

сăвăсем вула-ха?. —
вуламах
ĕрлерĕ сас,
еп
вулатăп акă...

Еп вулап
уй-хир йурри...
Йашă-хĕр йепрерĕ.
Манпала пĕрлех
тăри
тӳпере
сĕрлерĕ...

Ман умра
каллех
уй-хир
çимĕçпе сĕрешрĕ.
Тулă,
виккă,
клевĕр,
вир...
çилпеле пуплешрĕ.

Ой, ăшра
ҫĕрем çиçет,
ташша йаҫĕ
кăкăр...
Ак ăçта
ӳсет, пиçет
хурçăсемшĕн
çăкăр!

9.

Хаҫ уй-хирĕн те
йурра

«Ленин» йат кӗрет-и,
çамрӑк хӗр те
тутӑра
«КИМ»-па тӗрӗлет-и,—

ман ҫӗрен
таппи вара
кӑкӑрах тулласшӑн...
Уй-хир шавӗ
сӑвӑра—
хурçӑ шав пуласшӑн.

Ак çитес-пулас ыран
кӗмӗшке уй-хирӗн
тимӗрпе те
хурçӑран
сӗрешӗ
тумтирӗ.

1929 çул.

## ӲКĔТЛĔ КАÇ.

Сыпăк.

1.

Кӳлĕ йевĕр
пит те тăрă,
йанкăрах каçхи тӳпе.
Тулли уйăх
хаљ ун тăрăх
тухнă
çăлтăр кĕтӳпе.

Каллĕ-маллĕ
еп утатăп
пĕр-пĕѯѯен
сĕм-урампа.
Урара ман
çĕтĕк атă
тĕкĕрленѯĕ
сывлăмпа.

Кас пит лăпкă.
Лăпсăртатрĕ
йытă çеç ак
ман патран.
Кушак йевĕр

ҫăштăртатрĕ
каскăн ҫил
умри сатра.

Ҫатан урлă
куҫсем ҫупрĕҫ
ман виҫ хут та
ҫав сата...
Ҫав сатрах
ман шухăш супрĕ,
ҫĕрем туртрĕ
ҫав сатах.

Кĕҫĕр еп
кĕтсе илмерĕм
ҫав сата
йулташ-хĕре.
Кĕҫĕр манăн
ирĕлмерĕ
унсăр
кăмăл ҫĕрере...

2.

... Ҫĕмĕрт айĕпе ак
выртрĕ
сатра
икĕ ĕмĕлке...
Пĕринҫен пĕрийĕ
ыйтрĕ:
«Ма ес килтĕн,
Йемелкке?»

Йемелкке:

«Ну, кăштах хуллен калаç-ха,
ма вăрçан пустуй,
Лисук...
Тӳррипех сана
калас-тăк—
санпа пур ман
калаçу...

Çутçанталăк ĕмĕртет-тĕк
çĕре
ҫĕрлĕх кăкринҫен,—
çук-тăр,
сӳнмĕ ĕмĕрте те
йурату
çак çĕр çинҫе!

Маншăн ес—
ҫăн-ҫăн хĕрарăм,
таса анкĕл-турă пек...
Кăмăла уçма
хăрарăм
саншăн еп
пĕр-тӳррипех...

Виçĕ каç ман
хыпса çунҫĕ
сансăр
аскăнҫăк ҫĕрем.
Кăмăлна
пĕлесшĕн тӳнҫĕ
уйăх ĕнтĕ
пуç çĕре.

Виҫĕ каҫ
сана курмарăм
еп
йашă-хĕр вăййинҗе.
Маншăн
җунсăр тунсăхларĕ
сансăр
ахăр униҗе.

Каҫпалах пайан
тĕлпултăм
ик-виҫ арлă мăшăра...
Мĕншĕн еп
телейсĕр пултăм
сак тивлетлĕ
ҫĕршывра!?.

Ав куратни:
ĕмĕр тăлăх
уйăх
тĕпсĕр тӳпере...
Тусăм,
пĕл ес:
еп те тăлăх
сансăр
аслă тĕнҗере.

Сансăр манăн,
ĕненсемҗĕ,
йашă ĕмĕр
җыслă мар...
Мана ес кăшт
итлесемҗĕ,
пĕр самантлăх

çумма лăр....
Санпалах еп
(ес, тен, кулăн!)
ĕмĕрлесшĕн пурнăçа...
Тĕлĕкре те
ăнтăхуллăн
санпалах
еп курнăçап...

Ма ҫĕнместĕн,
мĕншĕн ҫĕмсĕр
кĕçĕр ес,
кала, манпа?
Йе еп саншăн
пит те сĕмсĕр
кăшт шăрт тапнă
сăнăмпа?

Çирĕме еп,
ҫăн та, пусрăм—
кĕтĕм
харсăр йашлăха.
Мĕншĕн
есĕ
пуçна усрăн
ман çумра ак,
кăлăхах?

Сана халĕ
урăх каҫҫă
каçсерен, тен,
«аҫашлаŭ»?
Тусăм,
тусăм,

ну, калаҫҫӗ
ним тунмасӑр,
«йулташла»?

Еп пӗлетӗп:
ес ҫӳреттӗн
ҫӗтӗк кӗлмӗҫ Петӗрпе...
Ман пата пырса кӗрен-тӗк,—
ҫӳрӗн
пархӑт тумтирпе...

Мӗн шуйтанӗ
«кӑсамулӗ»,
мӗн ес илӗн
Петӗртен?
Пури унӑн
ҫӗпҫӗм мулӗ,
пулни
ҫӗпҫӗм ӗмӗрте?

Кивӗ шупӑр,
кивӗ кӗрӗк—
ҫавсем ҫеҫ хаҫ
сан ҫире...
Ҫухӑн ывӑҫ,
ҫухӑн хӗрӗ,
ҫук,
вӗҫлеймӗҫ ӗмӗре!

Ҫӑрмантармӑп,
йурӗ,
паҫ та
еп
«телейлӗ мӑшӑра»...

Улĕм, çук!
сана çапах та
асакилĕп
хушăран»...

3.

Куçĕсем Лисукăн—
кӳлĕ,
çӳçĕсем—
кĕрен хăва...
Çын сисмешлĕ
вăрттăн кулă,
тен,
туйаť-тĕр ултава.

Лисук:

«Сан ку «тĕлĕк»
çиҫĕ сумлă...
Çитĕ!
уйăрл,
Йемелкке!»—
лапҫăк шĕшкĕ çатан çуммĕн
хăвăрт шăврĕ
ĕмĕлке...

Йемелкке:

«Ых! суҫка,
ан тар!
таратăн...
Йуратмастăн-тăк
мана,
«пĕлĕтре» кăна

йуратăн
ес
хăвăн «кăсамулна»!..

. . . . . . . . .

Лисук ӳкрĕ...

. . . . . . . . .

Тытăр!.. терĕм
çатан урлă
ывтăнса...

. . . . . . . .

4.

«Ма ҫасрах килмерĕн?..»
терĕ
Лисук манăн
йусанса...

. . . . . . . . .

Уйăх çеç, тен,
хуралларĕ—
йепле тусăмçăм мăйран
мана
хыттăн ыталарĕ
лăпсăркка сатра
кайран.

Кӳлĕ йевĕр
пит те тăрă,
йанкăрах
ирхи тӳпе.
Тулли уйăх хаҫ
ун тăрăх
анҫĕ
çăлтăр кĕтӳпе.

1929 ç.

## АППА ЙУРРИ.

Сахал мар еп
хĕнхур тӳсрĕм
патша пулнӑ ҫулсенҫе.
Пурнӑҫа пĕлмесĕр ӳсрĕм
пĕр тĕпел кукрийĕнҫех.

Астӑвап:
аттемĕм сутрĕ
ҫĕр тенке
мана йута...
Туйне турĕҫ,
ерех кӳпрĕҫ,—
хӑсӑк ҫитĕ
ҫĕр йытта...

Пурӑнаттӑм...
кĕҫ кӳпеҫҫи
упӑшкам сӑра-ерех,—
пустуйах
мана хĕнеҫҫĕ
«суҫкасем»-мĕн тесе... ех!

Пуҫтаратӑн ҫашӑк-тирĕк
йе апат-мĕн пĕҫерен...—
арҫынрахҫĕ
манӑн «ирĕк»,

хирӗҫсен-тӗк,—
ҫивӗтрен...

Кӑлкан йевӗр сарӑ ҫӳҫӗм
упӑшкамшӑн ҫеҫҭӗ ман...
Унҭух манӑн
мӗскӗн пуҫӑм
савӑк пурнӑҫ курайман.

Пӗрре епӗ ҭӑтаймасӑр
хамшӑн пултӑм
хам хуҫа—
«каскӑн» йатшӑн вӑтанмасӑр
тарса кӗтӗм
тарӑҫа.

Тарӑҫра та
ырлӑх ҫукҭӗ,
ӗҫ ӑшнех путаттӑм еп.
Ӗҫ укҫи
кунне виҫ пусҭӗ...
Мӑшкӑл—
кив тӗнҭен хисеп!

Ой, мӗнҭухлӗ хӗнхур тӳсрӗм
еп патша пур ҫулсенҭе.
Пурнӑҫа пӗлмесӗр ӳсрӗм
пӗр тӗпел кукрийӗнҭех.

———

Ҫӗнӗ пурнӑҫ
ирӗк паҭӗ,
упӑшкам
хӑҭ еп—
ҫынах.

Сӗм-тӗпел кукри ҫуталҫӗ,
клупа маншӑн
ҫул йаках.

Упӑшкамӑм хаҫ
ӗҫет-и,
ҫӑмӑртаӳ-и
ҫышкине,—
совета
ҫасрах вӗҫетӗн
шӗветме
ун ҫиллине.

Арҫынпа еп
ҫӑн танлашрӑм,
пухурах хаҫ
ал ҫӗклеп.
Советри ӗҫпе паллашрӑм,
советра та
еп ӗҫлеп.

Ҫӗнӗ йалӑм
уҫрӗ йаҫлӗ,
аҫапҫа ӳсет унта.
Ҫирӗк хупрӗҫ,
шкул уҫаҫҫӗ,
ултав тӗн сӳнет унпа.

Уй-хирте
кӗрлерӗ трактӑр
хӑйӗн паттӑр вӑйӗпе...
Вун пусу питне сӑрлатпӑр
тӗрлӗ-мӗрлӗ ҫимӗҫпе.

Тин тăватпăр
çĕнĕ пурнăç
арçынпа
хĕрарăм тан.
Коллектив,
комунă урлă
хăтăлатпăр нушаран.

1928 çул.

## КĔРХИ СУПОТНЕК.

Умра
пурçăн тумлă
кĕр...
Ун тивлеҫшĕн
ҫунăм
манăн хĕлĕхленҫĕ.
Шурă хурăн—
капăр хĕр,
мăйри мăййи унăн
ылттăн йăлтăр тенкĕ.

Типшĕм карҫăк—
улмуççин—
пĕр йарăм шăрçиййĕн
тĕсĕ
хĕрлĕ-сарă...
Ир ак
тăлăх Униççен
шăннă йĕтем çиййĕн
сикрĕ
пĕҫĕк сарăм.

Пĕҫĕк сарăмĕ—
масмак,
сарă пурçăн тĕрĕ,
тейĕн,—
ука,

ылттăн...
Кунти
пĕтĕм халăх ак—
касри йашă-хĕрĕ,
хӳхĕм
икĕ «ултă».

Тăлăх арăм
Униççен
вată-вĕт çемйийĕ
ĕçре халсăр-вăйсăр.
Çампа
ун йĕтемĕнҫе
ĕçлет пайан
ҫăрсăр
комсомол çемйийĕ.

Хĕрлĕ питлĕ
сăн-сăпат
халҫ кунта
вуниккĕ,
вуникĕ тăпаҫă.
Пăтти-патти...
пăтти-пат!..
йĕтем çийĕн
виҫкĕн
ҫӳхенет ак
сасă...

...Умра
пурçăн тумлă
кĕр...
Ун тивлеҫшĕн
ҫунăм
манăн хĕлĕхленҫĕ.

1929 çул.

## ХЁРЛЁ ТЫРĂ ЛАВЁ.

Çумлă хир—
кёрхи тӳпе;
хуратул çёмелё
хаҙ ăна хупларё.
Хушка пуçлă путек пек
йăпăлти хёвелё
ун çинҙе
выҙарё.

Пурçăн тумлăн
вёлкёшет
мăн çул тăрăх
хӳхлём—
кёрхи хир йулхавё.
Хыçран-хыç ак
тёлкёшет
хулана
темҙухлё
хёрлё тырă лавё.

Тинкёл-тенкёлл...
çӳçенет
çивҙё çинçе çеммён
кёмёл шăнкăравё.
Хула йеннех
çиçкёнет
çилё

вӗрнӗ ҫемӗн
лав ҫинҫи йалавӗ.
Ҫиҫкӗнет ҫилпе
йалав,
ҫил кӑларнӑ сасӗ
хурҫӑ хӗлӗх
унӑн:
«уй-хирпе
ӗҫҫен хула
ӗҫре
цырӗҫ таҫӑ!
Ӳсӗнӗ
комунӑ!»—
Виҫкӗн шухӑ ҫил
инҫех
ҫак сасса ӑсатрӗ
кӗрхи уй-хир тӑрӑх...
Ҫавӑнпа
хир ҫӗрҫинҫен
хулана ак
тапрӗ
лавӑн-лавӑн
тырӑ...
Цурҫӑн тумлӑн
вӗлкӗшет
мӑн ҫул тӑрӑх
хӳхлӗм—
кӗрхи хир йулхавӗ.
Хыҫран-хыҫ ак
тӗлкӗшет
хулана
темҫухлӗ
хӗрлӗ тырӑ лавӗ.
1929 ҫул.

## ОТПĂСК ХЫҪҪĂН.

Шалтлатса хупăнаť
уй-хапхи.
хам хыҫра ҫухалаť
тăван йал...

. . . . . . . . . . . .

Ак каллех-ҫке
тăхлан саспалли
ман алра ҫиҫкĕнет
йалт та йалт...

Ҫиҫкĕн,
ҫиҫкĕн
алра,
саспалли,
ҫеретлен сăмахпах
кассăран!—
Ĕҫпе хытнă
харсăр ĕҫ алли
ырма пĕлмĕ вăл ман
нихăҫан.

Еп ĕҫлеп.
Сĕм-вăрман,
Мăн-Ҫавалĕ...
сăвăран
тĕтреленҫĕҫ умрах.

Еп ĕçлеп.
Çĕкленет ҫун-хавалĕ!
Саспалли çиçкĕнни—
ҫăн тумрах.

Асаилтĕм хамах:
еп сĕнкеттĕм
Çавала
ҫӳхенме
кашни ир.
Вĕт-вăрман кăтрипе
килленеттĕм.
Шĕкĕр килҫҫĕ мана
çеçен хир.

Хĕпĕртеттĕм еп—
сарă ырашĕ
пĕкĕ çӳллĕш ӳссе
хумхансан...
Килĕшеҫҫĕ мана
йурă-ташă—
йал йаш-хĕрĕ
вăййа пухăнсан...

Каннă майăн
хирте пиçсе çитрĕ
вĕри çу тивлеҫпе
ӳт-пӳ ман.
Каллех еп
хапрăка
персе çитрĕм,
каллех кӳлгĕм
ĕçе
вăйăма.

Çиçкĕн,
çиçкĕн
алра,
саспалли,
ҭеретлен сăмахпах
кассăран!
Ҭыслă ĕçшĕн
харсăр ĕç алли
нихăçан
ырма пĕлмĕ вăл ман.

1928 çул.

## ÇĔРШЫВ ӲСĔМĔШĔН

Ӳсет,
ӳсет респуплĕк пирĕн;
пур ун
хурçă сатсем—
ик-виçĕ «Çĕмĕрле»...
Кĕрле,
респуплĕкĕм!
ĕçпех туллаш та
пурăн,
ĕçпех
ырми
ыраншăн
сехĕрлен.

Хурçă утсен колоннипе
ав карр!—
çеçен хире тухать
Канаш,
Вăрнар...
Кăклаç вĕсем
тĕпрен
аваллăха,
таптаç
харамлăха,
асаплăха.

Кӗрлех,
        респуплӗк!
        комунисăма
        ҫуп-ыткăнтар,
йалпа хула,
        алла-алăн,
        пӗрлех.
Колхос,
        ес
        савăта
            ҫимӗҫ турттар,
а, савăт,
        ес
        ăна
            шнейккă,
                плук,
                трактăр... леҫ.

Ҫӗкленӗ ал епир:
        туптатпăрах,
туптатпăр
        «пиллӗке»
                тăваттăра!
Ҫампа,
        пӗтӗм вăйпа
                ӗҫе кӳлӗн,
                        ӗҫҫен йăхăм,
пӗтӗм вăйпа,
        штоп йун-ӳтрен
                пӗрхӗнтӗр хӗм!

Кашни сехет,
        кун-ҫӗр,
                кашни ерне

пĕр ÿсĕмпех
пире
тăтăр йевитлĕ.
Унҫух ҫеҫ
комунисăма
кранитлĕн
ĕҫҫарĕ, ес,
сотсиалисăм кĕперне.

Кĕрлех,
респуплĕк!
комунисăма
ҫуп-ыткăнтар,
йалпа хула,
алла-алăн,
пĕрлех.
Колхос,
ес
савăта
ҫимĕҫ турттар,
а, савăт,
ес
ăна
шнейккă,
плук,
трактăр... леҫ.

1930 ҫул.

## ҪЕҪЕКЛӖ ҪӖРШЫВРА.

Украйнӑ!
Украйнӑ!
ҫеҫеклӗ ҫӗршыв!
санра хаҫ
пенҫин та
шуртулӑ шӑрши...

Тахҫан
ҫыхӑнаттӑн
тар тӗтӗмӗпе
есех вӗт,
Украйнӑ,
хавшанӑ ҫын пек.

Санрах ҫав,
Украйнӑ,
пирӗн ҫар
тахҫан
пӗр кӗвӗ
тӑсаҫҫӗ
хир тӑрӑх
йуса:

«Пӗлтер,
пушӑ хирӗм—
тӗтреллӗ инҫет,

хĕççи, тен,
умрах-тăр
Петђурăн
çиçет?

Пĕлтер,
тен,
шаккал пек
пире вăл
сыхлаŷ?
йе
шиклĕ мулкађ пек
таçта
ыйăхлаŷ?..»

Ах, çук,
пĕлтерместђĕ
ђĕлхесĕр инçет,
темђул йăлăнсан та,
Петђурă çинђен.

(Мулкађĕ—
Петђурă,
тилли—
пирĕн çар).
Йĕрсем вĕçленеђђĕç.—
Ей, пантă!
ан тар!

Кранатсем
çăрађђĕç
йун-ŷте
çĕрпе.
Йŷçеђђĕ,

кӳпет̧т̧ӗ
сывлӑш
тӗтӗмпе.

«Маттурсем!»
тейет̧т̧и
Пут̆оннӑй
пире—
ҫиҫӗмле ҫиҫет̧т̧ӗҫ
шашкӑсем
ҫире...

Вилӗмрен,
ҫук,
епӗр
хӑраса тӑман.
Вӑйхала
нихҫан та
харама йаман.

Кайран,
йун,
ӳтпе-мӗн
пӑсланнӑ хирпе
пирӗн ҫар
кӗрлет̧т̧ӗ
ҫӗнӳ... маршӗпе.

Ой, пулнӑ ҫав
вӑхӑт,
манма хӗн
ӑна.
Пур пантӑ

## МАЙАККОВСКИПЕ «КУРНӐҪНИ».

Траххомлӑ лампӑ.
Сӗрӗмлӗ тӗтре.
Каска сӗтел.
Хут-кӗнеке купи.
Шыратӑп
рифмӑсем
мулҫа-пӳртре.
Тетраҫ ҫинҫе
ҫиҫет
перам ҫуппи.
Йаштак пӳпе
хура ҫтена ҫинҫен
куҫпа курман паллана ҫын
хӑпса
тухаҫ умма,
ытти портретсенҫен
уйрӑмӑнах,
йерой!
пирус хыпса...
Аван-и,
Майакковски!
пирӗнтен,
хай, «т е п ӗ р т ӗ н ҫ е н е»
хӑҫ есӗр кайнӑ,
ҫапах,—
права поетӑн!—

сирĕнпе
халап тытмасăр
кĕçĕр
еп ҫăтаймăп.
Каçарăр!
сирĕн умăра тăма
ман тухмалла-ха
тинĕспе,
мăнтарнăн...
Вĕт есĕр
хурçă рифмă-риттăмпа
Парнас сăртне
тĕпрен
хирме пултарнă!
Лере,
тĕнҫе ĕççарĕ
сирĕн сасăрпа
туптаҫҫĕ хĕçпăшал...
Епĕр туптаттăмăр
компайăн,
трактăр...
Выртаҫҫĕ пирншĕн
сирĕн умăрта
çап-çутă
Маркăс,
Ленин
хывнă трактă.
Анҫах,
«йăланăн çыранне
пырса
çапăнҫĕ,
ванҫĕ
йурату кимми»...

Тытма пӗлмерӗр
есӗр
паруса—
Кавӑҥтен тухрӑр
кавӑҥе килми...
Влатимӗр Майакковски!
ну,
калӑр, ма
мӑшкӑл маски
усайрӑр пит ҫинҙен?
Хусамӑрах
пӗлмерӗр тустарма
«п у р ы р л ӑ х-т е л е й е
к у н ҫ у л с е н ҙ е н».
Инкек
сӳнеҙҙӗ вӑл.
Ӑна
ҫӗнме
ансат
кӗрешӳпе
йе ӗҫпеле.
Вӗт—
мӑшкӑл,
есӗр пек
йе
Ҫеҫпӗлле
хӑвнах пӑвмашкӑн
йе
хӑвнах
пеме...
Тен,
йӑвӑр мар
хӑв кунҫулнах
татма...

Анҫах,
умри кунҫул
тивлетлӗ ҫух,
пит намӑс
пурнӑҫра
найанланма;
найанлӑхшӑн
ӗҫре
хаҫ
вырӑн ҫук!
Хӑй вӑл,
пурнас кунҫул
никамӑн та
тӳпе манерлӗ
вӗҫсӗр мар
етемӗн.
Хӗррийӗ пур
аслӑ Тайканӑн та.
Никам та
тинӗсе
ҫырансӑр
темӗ...
Ҫапах,
ҫанталӑк хӑй
пилленӗ ӗмӗре
пирнтен
хӑйех вӑл
илтӗр
пӗр-пӗр ир...
Ҫак саккуна
кам
ирсӗрлет
йе ҫӗмӗрет,
ҫав—

пурнăçри
хăравçă теçерттир.

---

Сире
сăмах ман,
итлĕр,
ђĕррисем!—
сăвăсемпе,
кĕрешӳпе,
ĕçпе
çанталăк
суннă
ĕмĕре
илсе
пурнар хаљ
пурнăçри
пур тивлетпе!
Куратпăр
епĕр:
пирĕн хаљ
умра
çап-çутă
Маркăс,
Ленин
хывнă трактă.
Лери
тĕнђе ĕççарĕ
пирĕн йурăран
шăраттăр
хĕçпăшал...
Кунти—
компайăн,
трактăр...

1930 çул.

## ХУРҪӐ ЙУРӐСЕМШӖН.

Тапхӑр-тапхӑр
темме
кӑкӑра
ӡӗрем манӑн
туллаӑ шутсӑрах.—
Йе
сӗрлет
ҫепӗҫ сас
пирӗн меллӗн...
Йе
хаӡ пирӗн
пиҫмен
йурӑра
нихӑш йат
ӡӗрене
витермеллӗх...

Хӑшӗ,
ӡӑн,
пайан кун та
йӗрет.
Йе
«Нарспин»
Кӗҫтенкки
уншӑн ҫук...
Ие

пайан та
хăшĕ
«Сĕрĕмрех»...

Ма савас
тахçанхи ĕнере
ĕçҫен клас
ыранпа
кавар ҫух?!.
Халĕ епĕр
тăван çĕршыва
çĕнететпĕр
куллен
стройккăра.
Çавăнпа
çĕнĕлле тапхăрта
çепĕç йурă
пайаншăн
шывак.

Çĕршывра вăл,
ҫăнах,
ирĕк
пысăк,—
хăт кама
есĕ
сав
йурăра.
Анҫах хаљ
хурçă тапхăрăн
йышĕ
хурçă йĕр
йăлăнат
пероран.

Кам та кам
пайанхи тапхăра
сăвăра
пĕр салхусăр
сăнлаť,—
çав
илтейĕ кăна
таврара
хăй çинţен
халĕ
«ţăн поет»
йат.
Хурçă хĕлĕх
тирме
ţĕлхене—
ĕç çинех
ĕслетер
ţĕрене.

Унţухне
тин
калар:
çĕршыв,
ме—
ĕç шавне
мухтакан
кĕввĕме!

1929 çул.

# НЕСТĔР ЙАНКАСĂН

ку таринҫҫен тухнă

сăвă кĕнекисем:

1. «Сăвăсем». Йанкас, Тукташ, Уйăп М.—виҫҫĕшĕнне Ҫăвашистат 1930-мĕш ҫулта кăларнă. Хакĕ 45 пус.

2. «Ирхи йĕрсем». Ҫăвашистат 1931-мĕш ҫулта кăларнă. Хакĕ 45 пус.

3. «Вихтăрпа шăнкăрҫ». Пионерсем ваҫҫи ҫырнă сăвă. Ҫăвашистат 1931-мĕш ҫулта кăларнă. Хакĕ 15 пус.

Цена 50 коп.

Нестэр Янгас

# СТИХОТВОРЕНИЯ

Чувашский язык. Обл. худ. Потапова и Орлова.

ОГИЗ СРЕДНЕВОЛЖСКОЕ КРАЕВОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО

САМАРА—МОСКВА 1932